Раççей – пирĕн Тăван çĕршыв

ПАТРИОТ

Патриотизмла воспитани ыйтăвĕсемпе уйăхсерен тухакан кăларăм

Çамрăк пушарнăйсен слечĕ

Шупашкарта шкул ачисен спортпа техника тата çарпа прикладной спорт тĕсĕсемпе А. Николаев космонавт Кубокĕшĕн 5-мĕш спартакиади шучĕпе республикăри çамрăк пушарнăйсен 19-мĕш слечĕ иртрĕ. Унта Муркашри çамрăк техниксен станцийĕн Ю. Ершов ертсе пыракан команди те хутшăнчĕ. Командăра Муркаш лицейĕнче вĕренекенсем: А. Максимов, Р. Егоров, И. Михайлов, А. Чернов, Р. Иванов.

Пирĕн ачасем «Пушар хăрушсăрлăхĕн азбуки» конкурсра 1-мĕш, пушар спринтĕнче 2-мĕш, «Гидрант» дистанцире 1-мĕш вырăнсене тухнă.

Пĕтĕм конкурссен пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн ачасем куçса çӳрекен кубока тивĕçнĕ.

О. ЮЛИН.

Ĕç çынна илем кӳрет

«Ĕçрен ан хăрăр, ан суйăр, ан улталăр»

Кирек епле çын та хăйĕн ĕмĕрĕнче вăл е ку чăнлăх патне пырса тухать: кам хăйне мала хурса пăхать, кам ыттисем çинчен шутлассине тĕп тивĕçе кăларать. Вĕсем те, кусем те общество аталанăвĕнче йĕр хăвараççĕ, анчах иккĕмĕшсен сухи тарăнрах та çимĕçĕсем те тухăçлăрах пулаççĕ. Çакнашкал чăнлăх патне пырса тухрăм эпĕ 1989 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче «Чăваш АССР промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ Николай Филиппович Скворцовпа **(сăн ӳкерчĕкре)** каласнă май.

...Пахчаран йăран туса кĕнĕ Мария Сергеевнапа Николай Филиппович кил картинчи ĕçсене пуçтарса пӳрте кĕчĕç. Ыран 70 çул тултаракан арçын кĕске кану вăхăчĕпе усă курса аса илӳсен çăмхине сӳтме килĕшрĕ. Кунта вара йăлтах Тăван çĕршыва юратни, халăх хуçалăхне малалла аталантарма тăрăшни, çынсен пурнăç шайне ӳстерессишĕн вăй хуни.

– Пире урăхла пурăнма вĕрентмен. Вăрçă ачисем эпир. Эпĕ аттене астумастăп. Вăл, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине малтисемпе пĕрле тухса кайнăскер, пирĕн ирĕклĕ пурнăçшăн фронтра хыпарсăр çухалнă. 5 ачана (эпĕ – кĕçĕнни) анне Пелагея Ивановна пĕрченех ура çине тăратрĕ. Ачаллах çĕр ĕçне хăнăхтарнă анне пире: «Ĕçрен ан хăрăр, ан суйăр, ан улталăр», – тесе вĕрентни паян та асран каймасть, – хăй пурнăçĕн тĕп шăнăрне палăртса калаçрĕ ĕç ветеранĕ Н. Скворцов.

Амăшĕн сăмахĕсене тĕпе хурса пурăннă Николай Филиппович паян çамрăксене те çавнах вĕрентет.

Вунă çултах каникул кунĕсенче Шаптак Муркаш ачи Коля Скворцов амăшне пулăшма тата çемьене тĕкĕ пама колхоз ĕçĕсене хутшăнма пуçланă. Çамрăксемпе хирте тупăшса тырă вырни, ĕçе мала хурса хиртех çĕр выртни, ирхине амăшсем çăкăр леçме пырасса кĕтни арçын ачара ĕçре çĕнтерес туйăма вăйлатнă-çирĕплетнĕ кăна.

– Ĕç çынна илем кӳрет теççĕ те, манăн вара ун çумне çапла хушса калас килет: «Ĕçлесен çеç çын тулăх пурăнайрать». Кунта та эпĕ хамăн аннен пурнăçне тĕслĕхре тытатăп. Ĕçрен хăраманскер, иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче колхозсем йĕркеленсен вăл, вуламаçырма, алă пусма пĕлекенскер, колхозри çăм арманне тытса-йĕркелесе пынă. Эпĕ те хам пурнăçа ĕçре кăна йĕркелесе пытăм, – терĕ Николай Филиппович пирĕн каласу ĕç çине кĕрсе кайсан.

Çичĕ класс вĕренсе пĕтернĕ каччă колхоза ĕçе кĕрсен пĕр çул рядовой колхозникре, çулталăк конюхра ĕçлесен Муркашри сĕт заводне кочегар пулса ĕçе вырнаçать. Нумай шыв юхрĕ унтанпа. Ĕçре ответлăха туякан çамрăка завод директорĕ И. Евдокимов çĕр кăмрăкĕпе хутса электричество паракан локомобиль машинистне вĕренме ярать. 1958-1962 çулсенче Совет Çарĕнче службăра тăнă хыççăн Шупашкарти автомехколоннăра водительте ĕçленĕ хушăрах автомеханике вĕренсе тухать, Чул хулари автодорожнăй техникумра пĕлӳ илет. Кун хыççăн Николай Филиппович тĕрлĕ çулсенче КПСС Муркаш райкомĕнче водительте, Муркашри кирпĕч заводĕнче инженерта ĕçлет, куçăмсăр майпа Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухать.

– Ĕçпе вĕренĕве пурнăçра юнашар тытса пытăм. Çакна шута илсех-тăр 1974 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче мана Муркаш типографине ертсе пыма шанчĕç. Кунта та ĕçе çĕнĕлле йĕркелесси, типографипе редакци валли çĕнĕ çурт тăвасси малти вырăнта пулчĕ. Ĕçрен хăрамарăмăр, алă усмарăмăр – вунă çултан çĕнĕ хăтлă çурта ĕçе куçрăмăр, – каласа парать ĕç ветеранĕ.

Николай Филипповичăн ĕç кĕнекине пăхатăп та тĕлĕнетĕп: ĕç ветеранĕн ĕç кĕнекинче тĕрлĕ хисепсен приказĕсем 17. Вĕсен шутĕнче лайăх ĕçленĕшĕн 10 тенкĕ преми те, СССРпа РСФСР тата Чăваш Республикин Патшалăх издательство комитечĕсен Хисеп грамотисем те, «Пичет отличникĕ» паллă та, «Чăваш АССР промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят та.

– Пĕрре курсах юратрăмăр та 42 çул ĕнтĕ пĕрле. Ывăлпа хĕр çуратса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăлартăмăр. Паян вĕсен ӳсĕмĕсемпе савăнатпăр, мăнукпа килене-тепĕр. Иртен пуçласа каçчен килти хушма хуçалăхра тăрăшатпăр. Пурнăç мана Кольăпа тĕл пултарнине телей тесе йышăнатăп паян, – терĕ сĕтел хушшинче пирĕнпе юнашар çемье фотоальбомне уçса ларнă май ĕç ĕмĕрне районти тĕп больницăра ирттернĕ Мария Сергеевна.

...Кăнтăр вăхăчĕ иртрĕ. Манăн аслă туссем кил картинчи ĕçсене кӳлĕнчĕç.

Анатолий БЕЛОВ.

Тăван ен илемĕшĕн

Йывăçсем лартрĕç

Чăваш Республикин Президенчĕн 2005 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Йывăç кунне ирттерме палăртнă йышăнăва халăх кăмăлларĕ курăнать. «Йывăç лартма нихăçан та кая мар тесе Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнчи çĕнĕ урама пурăнакан çамрăксем пĕрле пуçтарăнса иртнĕ эрнере урам çумĕнчи çырмара çĕр ишĕлнине чарас тĕллевпе йывăç лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе икĕ кун ĕçлерĕç. Ĕçсене йĕркелекенĕ тата хавхалантараканĕ çак урамра пурăнакан 29 çулхи çамрăк Алексей Геннадьевич Яковлев пулчĕ.

Çамрăксем эрозипе кĕрешес ыйтăва тĕпе хуни савăнтарать кăна. Çак тĕллевпе вĕсем Вуслă варне çĕр ишĕлекен вырăна 150 хыр хунавĕ лартрĕç.

– Унченхи çулсенче ку вырăна чăрăшсем лартсаччĕ, анчах Çĕнĕ çул уявĕсенче вĕсен пĕр пайне ял çыннисем касса кайни чуна ыраттарчĕ. Çак тĕрĕсмарлăха пĕтерес тесе тата тăван тавралăх шырлан ытамĕнчен тухтăр тесе кăçал хырсем лартма шутларăмăр. 150 хунав туянтăмăр та ĕçе кӳлĕнтĕмĕр, – каласа парать ырă ĕç пуçаруçи А. Яковлев.

Каларăм ĕнтĕ ырă пуçаруран пĕр урамра пурăнакансем те юлмарĕç. Ĕç ĕмĕрне «Свобода» хуçалăхра сысна ферминче ирттернĕ Елизавета Донскова, Маринăпа Тимур Барминовсем, Валерий Смирновпа Ангелина хĕрĕ,

Сергей Смирнов çак кунсене йывăç лартас ĕçре ирттерчĕç. Пĕрлехи тăрăшулăхпа хăйсен урамне тирпей-илем кĕртрĕç, малашне пĕрле ĕçлемелли пирки калаçрĕç. Тĕллевре – кунти пĕчĕк кӳлле тасатса тирпейлесси. «Тавралăх илемĕ хамăр алăра», – терĕç çамрăксем йывăç лартса пĕтернĕ май вĕсене пăхса ӳстерессишĕн те хăйсемех явапла пуласса пытармасăр. Çакнашкал ыйту вара кашни ял тăрăхĕнчех малти вырăнта. Мĕнех, тирпейлĕх ĕçне пурте активлă хутшăнар-и?

А. БЕЛОВ.

Пултарулăх

Тавах

Шăпчăк кайăк савăнать
Чĕпписем çине пăхса.
Атте-анне хĕпĕртет
Ачисене ыр сунса.
«Ырра курсан, ыр пулсан,
Усал çынпа ан çыхлан», –
Тăн панă пире анне
Йĕпеннĕ куçне шăлса.
Хамăр та халь аннесем,
Кукам, асанне пулса,
Савăнатпăр аслисем
Ачасем çине пăхса.

Роза СОЛОВЬЕВА.

Патриотла воспитани ыйтăвĕсемпе

Ĕçе йăлана кĕртиччен пурнăçламалла

Патриотла воспитани çинчен, шел пулин те, шкулсенче ытларах чух Тăван çĕршывăн хӳтĕлевçин тата Çĕнтерӳ кунĕсем умĕн, çамрăк армеецсен «Зарницăпа» «Орленок» вăйăисенче çеç аса илетпĕр. Хăвăрах шутласа пăхăр: çĕршыва, тăван ене чăн-чăн юратакан çынна ӳстерес ĕçре çителĕклĕ-и çакă? Хуравĕ паллă – çук. Тăван çĕршыва вара унăн çут çанталăкĕнчен пуçласа çарĕ таранах хисеплеме, упрама вĕрентмелле. Апла пулсан çак ĕçĕн результачĕ пултăр тесен ачасене тĕрлĕ енлĕн аталантармалла.

Иртнĕ «Зарница» тата «Орленок» çамрăк армеецсен вăйăисенче Муркашри, Мăн Çĕнтĕрти тата Чуманкассинчи вăтам шкулсен çарпа патриотика клубĕсен командисем хутшăнчĕç. Каламалла, вĕсен теори енĕпе те, практика енĕпе те пĕлӳ япăх мар. Анчах ытти шкул командисем хушшинче вĕсен татах та çуллĕрех шайра пулмалла. Малтанах дисциплина енĕпе. Вĕсем çарпа патриотика клубĕнчен пулни тумĕ çине çеç мар, куçĕсенчен пăхсан та паллă пулмалла: çирĕплĕх, мал туртăмлăх пулни палăрмалла. Ку вăл каллех практикăпа теори татăксăр пулса пымаллине пĕлтерет. Çак клубсен те пулин çулла каникула каймалла мар. Пачах та канмалла маррине пĕлтермест ку, çулла та çак ĕçе пăрахмалла маррине пĕлтерет. Ачасене интереслентерсен, вĕсем çăвĕпех клубра пуçтарăнĕç. Вара активлăх тени те учительсенчен кăна мар, ачасем енченех пулĕ. Вĕсене курсан ытти шкулсенче вĕренекенсем те малалла туртăнĕç.

Районта кăçал Çĕнтерӳ кунĕпе призывниксен кунне пĕрле ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ уявах пулчĕ, паллах. Аслă ăру çыннисемпе çамрăксен хушшинче çакăн евĕр çыхăну кирлех. Çара каякансем çав кун районти историпе краеведени музейĕнче, «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче, чиркӳре те пулчĕç. Çакă питĕ усăллă. Анчах каллех тахçанта пĕрре кăна мар, часчасах кирлĕ яшсемпе хĕрсене çакăн евĕр мероприятисем. Пĕр-пĕр паллă датăна халаллани мар, ятарласа çамрăксемшĕн ирттерни.

Вырăнти ял тăрăхĕсен администрацийĕсем çамрăксемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавăнпах пулĕ шкултан вĕренсе тухнисем «салансах» каяççĕ. Пĕр çирĕп тытăм, пĕрлĕх кирлĕ-çке вĕсене те. Çамрăксемпе ĕçлекен канашсен хастарлăх сахалрах. Çавăнпах яшсемпе хĕрсене тĕрлĕ конкурссене явăçтарасси кирлĕ шайра пулса пымасть. Çамрăксен çулталăкĕнче иртекен мероприятисем шкул ачисемшĕн кăна пулмалла мар, 18-30 çулхисемшĕн те. Мĕншĕн, калăпăр, «çавра сĕтел» тавра ветерансемпе çамрăксене пуçтарса çамрăклăх вăхăтĕнчи ыйтусене хускатас мар? Сумлă ватăсем кирлĕ сĕнӳ-канашпа пулăшасси пĕрре те иккĕлентермест. Çакăн пек мероприятисем ватăсемпе çамрăксем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе яма та, кайран çирĕплетме те пулăшăç. Пур ĕçе те йăлана кĕрсе çитиччен тумалла, пĕр хут ирттернипе çырлахмалла мар, вара усси пулать.

Е. ЧЕРНОВА,
район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ.

Ăрусен паттăрлăх çыхăнăвĕ

Çĕршыв умĕнче пит хĕретмерĕмĕр

Çулсем иртнĕçемĕн çеç эпир 1945 çулхи Çĕнтерӳ кунĕ Çĕр планета çинчи пĕтĕм пурнăçа улăштарнине куратпăр-туяттпăр. Аслă çапăçу хирĕсенчен Чăвашран кайнă салтаксем çеç 106 пин çын тăван ене таврăнайман. Вăл йышра Çатракасси ял тăрăхĕнчен те пайтах: çĕршыв чĕннипе фашизмпа кĕрешме вăрçа тухса кайнă çĕршер çынран чылайăшĕ киле таврăнайман. Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир ку тăрăхра пурăнакан 3 ветерана куратăр. Вĕсем **(сулахайран сылтăмалла): Петр Степанович Степанов, Вячеслав Иванович Иванов, Алексей Кузьмич Замятин**.

Çулсем иртеççĕ, анчах асаттесемпе аттесен паттăрлăхĕ ăруран ăрăва куçать. 2-мĕш сăн ӳкерчĕкре эсир Муркашри вăтам шкулти «Родина» çарпа патриотика клубĕн членĕсене куратăр. Çак клуба çӳрекенсенчен 10-шĕ кăçал çар училищисене вĕренме кайма документсем хатĕрлесе панă. Вăл шутран 3-шĕ – хĕр ачасем. **Сăн ӳкерчĕкри И. Васильевапа А. Петрова тата Андрей Андреевпа Алексей Павлов (сылтăмрисем)** – çав шутри çамрăксем. Сăмах май, 10 яшпа хĕртен 9-шĕ пĕлтĕр республикăри «Орленокра» 1-мĕш, Раççейри çамрăк армеецсен «Победа» юхăмĕнчи финал вăйăисенче 42 командăран 12-мĕш вырăна тухнă. Апла пулсан ачасем çĕршыв сыхлавне тăмалли пĕрремĕш утăма тунă. Анăçу пултăр сире малашне те!

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.